чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă
1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă
1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

180/26586/ № | Ытлари кун, 2014, авăн (сентябрь), 16 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

# Кашни отрасльтех çитĕнӳ пур

***Авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнче ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев республика Правительствин членĕсемпе, федераци влаçĕн территори органĕсен тата хула округĕсен ертӳçисемпе канашлу ирттернĕ.***

Кун йĕркине пăхса тухиччен Шупашкар хулинчи Петров урамĕнчи 9-мĕш çуртри инкеклĕ лару-тăрăва сӳтсе явнă.

ЧР строительство министрĕ, Правительствăн чрезвычайлă лару-тăрăва асăрхаттарас тата сирес, пушар хăрушсăрлăхне тивĕçтерес енпе ĕçлекен комиссийĕн председателĕ Олег Марков Шупашкарти Петров урамĕнчи пурăнмалли 9-мĕш çуртри строительство конструкцийĕсем техника тĕлĕшĕнчен мĕнле пулнине хаклакан, кăлтăксен сăлтавне палăртакан, çак çурт пĕтĕмĕшле еплерех иккенне, унпа малашне усă курма май пуррине хаклакан комплекслă экспертиза пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен пĕлтернĕ. Малтанлăха палăртнă тăрăх – лаптăк раствор çирĕплĕхĕ енĕпе питех те пĕчĕк маркăллă пулнипе арканнă.

Экспертсен шухăшĕпе – Петров урамĕнчи пурăнмалли 9-мĕш çуртăн пĕрремĕш подъезчĕ ишĕлме пултарать, ăна юсама май çук. Пĕрремĕш подъезда ишнĕ хыççăн иккĕмĕш подъезд пирки тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тума пулать. Виççĕмĕш подъздра хальхи вăхăтра хăрушлăх çук, лару-тăру йĕркеллĕ.

Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков пĕлтернĕ тăрăх – ишĕлме пултаракан çуртри граждансен хăрушсăрлăхне тивĕçтерес ыйтусене веçех татса панă. Хула администрацийĕн, полиципе Чрезвычайлă лару-тăру министерствин сотрудникĕсем çынсен япалисене илсе тухассине йĕркеленĕ, вĕсене турттарса кайма транспорт уйăрнă. «Эпир çак çуртра пурăнакансен йышне палăртрăмăр. 165 хваттертен вырăна 75 хваттер харпăрлăхçисем е хваттер тара илсе пурăнакансем пычĕç, 90 хваттерте пурăнакансем тата харпăрлăхçăсем хальлĕхе килмен-ха. Çак çуртра пулнисен 80-90% – хваттер тара илсе пурăнакансем», – тенĕ Алексей Ладыков.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ ишĕлме пултаракан çурта туллин инвентаризацилеме, юридици документчĕсем йĕркелемесĕр, «сăрă» схемăсемпе хваттерсене камсем тара парса пурăннине пĕлме хушнă.

«Хваттерсен 95% приватизациленĕ, пурăнмалли çурт-йĕршĕн харпăрлăхçăсем яваплă. Вĕсене массăллă информаци хатĕрĕсем урлă хăйсен çуртĕнчи чрезвычайлă лару-тăру çинчен пĕлтернĕ, анчах та çак çынсем хăнк та тумаççĕ», – палăртнă Михаил Игнатьев. Çавăн пекех вăл çуртра миçе хваттере страхланине пĕлме хушнă **/тĕпленрех – 2-мĕш стр./.**

Республикăн 2014 çулхи кăрлач-çурла уйăхĕсенчи социаллă пурнăçпа экономика аталанăвĕн малтанхи пĕтĕмлетĕвĕсем çинчен Чăваш Республикин экономика аталанăвĕн, промышленноçпа суту-илӳ министрĕ Владимир Аврелькин пĕлтернĕ.

Промышленноç производствин индексĕ 2014 çулхи кăрлач-çурла уйăхĕсенче 105,4% пулнă, çав шутра ĕçлесе хатĕрлекен производствăсем енĕпе – 106,8%. Чăваш Республикинче 15 пин вак тата вăтам предприяти ĕçлет, вĕсен çаврăнăшĕ кăçалхи 8 уйăхра 138 млрд тенке çитнĕ, иртнĕ çулхи çак тапхăртипе танлаштарсан 14% ӳснĕ.

Чăваш Республикинче социаллă пĕлтерĕшлĕ апат-çимĕç продукчĕсен хакĕсен федерацин Атăлçи округĕнчи чи пĕчĕк ӳсĕмне палăртнă. Кăрлач-çурла уйăхĕсенче вак суту-илĕвĕн пĕтĕмĕшле çаврăнăшĕ 84,4 млрд тенкĕ е 2013 çулхи çак тапхăртин 101,2% чухлĕ пулнă. 2014 çулхи 8 уйăхри вăтам ĕç укçи 20452 тенкĕпе танлашнă, 9,3% ӳснĕ.

**А.КУЗНЕЦОВА**

# Пĕрлехи ӳсĕме пурин те тӳпе хывмалла

## ЙĔПРЕÇСЕН АСĂРХАТТАРУСЕНЕ ШУТА ИЛСЕ ЛАРУ-ТĂРĂВА ЛАЙĂХЛАТМАЛЛАХ




Анатолий ФИЛИППОВ сăн ӳкерчĕкĕ

***Иртнĕ эрне кун республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Канаш хулинче пулнă хыççăн Йĕпреç поселокне килсе çитрĕ. Район центрĕ ăна хăйĕн тасалăхĕпе, тирпейлĕхĕпе, тĕп урамăн икĕ енĕпех асамат кĕперĕн тĕсĕсемпе ялтăрса çиçекен капăр чечексемпе кĕтсе илчĕ. Юратаççĕ илеме Йĕпреçсем. Ятсем панă чухне те сăнарлăха палăртакан сăмахсемпе усă кураççĕ.***

Михаил Васильевич малтан «Асамат кĕперĕ» тĕп пасарта чарăнчĕ. Çав кун ку тăрăхра «Кĕр парнисем» ярмăркка иртнĕ май пасара хăйсен хушма хуçалăхĕсенче çитĕнтернĕ улма-çырлапа пахча çимĕçе сутакансем йышлăн пуçтарăннă. Республика ертӳçи ялта тавар туса илекенсем сĕнекен продуктсемпе, вĕсен хакĕсемпе кăсăкланчĕ. Сентресем çинче пĕтĕмпех хамăрăн япаласем пулнăшăн савăнчĕ. «Хамăрăнне мĕн çиттĕр ĕнтĕ? Вăл таçтан, çичĕ ютран кӳрсе килни мар. Хамăрăн пур енĕпе те таса, çав вăхăтрах тутлă та», – терĕ вăл пĕр лавккаран теприн патне çул тытнă май. Пасар администрацийĕ çак тапхăрта, «Вырăнтине суйла – хамăрăнне туян» акци пынă вăхăтра ял хуçалăх продукчĕсем сутакансенчен вырăн укçи илмест иккен.

«Асамат кĕперĕ» ООО хăйĕн лаптăкне тăтăшах сарать. Паянхи куна кунта 120 ĕç вырăнĕ, пасар куллен çĕр-çĕр çыннăн ыйтăвĕсене тивĕçтерет. Нурхайдар Алимов директор хаклă хăнана çакăн çинчен пĕлтернĕ хыççăн Михаил Васильевич ăна паян кăна мар, ӳлĕмрен те хушма хуçалăхсенчен тавар илсе килекенсене ăна пĕр чăрмавсăр сутма тивĕçлĕ лару-тăру туса пама сĕнчĕ.

Тепĕр самантран пасар сутакансемпе туянакансен вырăнĕ кăна мар, республика Пуçлăхĕпе Йĕпреç поселокĕнче пурăнакансен ĕçлĕ калаçу вырăнĕ те пулса тăчĕ. Çапла пулмалла та ĕнтĕ, мĕншĕн тесен Михаил Игнатьев кирек ăçта кайсан та халăхпа куçа-куçăн тăрса, уççăн калаçассине чи малти вырăнта тытать, кун пек чухне çынсенчен вĕсене ытларах мĕн хумхантарни-пăшăрхантарни çинчен ыйтса пĕлет.

Хăнăхнă йăларан Йĕпреçре те пăрăнмарĕ, хăйĕнпе тĕл пулма килнисене уçă та ирĕклĕ калаçăва хутшăнма чĕнчĕ. Лешсем вара çав майпа усă курчĕç те. Вунă çын – вунă ыйту. Пур чухне те çак шухăш чăна тухмасть иккен. Йĕпреçсем республикăн пĕрремĕш çыннине панă тĕрлĕ ыйтăва пĕтĕмлетсен акă мĕн курăнчĕ: вĕсем пурте пĕрешкел тĕллевпе çыхăннă. Çӳлти органсем мар, вырăнти влаçсемех татса памаллискерсем. Паллах, мĕн çуккине, кирлине пĕтĕмпех республика ертӳлĕхĕ туса парасса кĕтсе ларни вырăнлă та, килĕшӳллĕ те мар. Çакна Михаил Васильевич Йĕпреç район ертӳлĕхне çирĕппĕн ас тутарсах каларĕ.

●➡ *2 стр.*

# «Пĕрлĕхлĕ Раççейĕн» тепĕр çĕнтерĕвĕ



Çĕр-шыври хушма тата вăхăт çитичченхи сасăлавĕнче «Пĕрлĕхлĕ Раççей» политика партийĕн кандидачĕсем пур округра та пысăк кăтартупа вырăнти влаç тытăмне суйланнă. Авăн уйăхĕн 14-мĕшĕнчи суйлавра республикăри виçĕ ял тăрăхĕн пуçлăхне палăртнă.

РФ Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн пулăшуçи Сергей Валенков Чăваш Республикинче суйлав чăрмавсăр, тавлашусăр иртнине, унăн пĕтĕмлетĕвĕ объективлă пулнине çирĕплетнĕ.

Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕ ял тăрăхĕн администрацине малашне Галина Ефимова ертсе пырĕ. Галина Георгиевнăшăн суйлавçăсен 76,49% сасăланă.

Шупашкар районĕнчи Çырмапуç тата Тăвай районĕнчи Чутей ял тăрăхĕсен пуçлăхĕн «тилхепине алла илнĕ» Рамиль Гельметдиновпа Григорий Куклов та – асăннă парти сĕннĕ кандидатсем. Рамиль Гаязетдиновичшăн электоратăн 81,76% сасăланă, Григорий Петровичшăн – 76,19%.

Кăсăкли: хăйсен кандидатурисене сĕннисем ытти парти кандидачĕсенчен ытларах саса пухнă.

**Ю.ПЕТРОВ.**

## ĔÇЛĔ ÇУЛ ÇӲРЕВ ХЫÇÇĂН

# Укçа айккинчен килессе кĕтмелле мар



Аса илтеретпĕр – авăн уйăхĕн 11-мĕшĕнче ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев тата республика парламенчĕн ертӳçи Юрий Попов ертсе пынипе Чăваш Республикин делегацийĕ Пенза облаçĕнче пулнă. Унта ял хуçалăх отраслĕн объекчĕсен ĕçĕпе паллашнă.

Пенза облаçне кайса килни çинчен **Чăваш Ен парламенчĕн спикерĕ Юрий Попов** акă мĕнлерех каласа кăтартать:

«Федерацин Атăлçи округĕнчи кӳршĕсен опычĕ çав тери усăллă пулмалла. Пире влаçпа бизнес çыхăну тытнин питех те кăсăклă моделне кăтартрĕç. Пайтаçăсен пĕрлĕхĕ яла инвестици хывма хăранине Пенза тăрăхĕнче ӳкĕтлесе мар, пайăр ĕçсемпе тĕп тума май килнĕ. Инвестор килессе кĕтмесĕрех регион Правительстви тĕп çул-йĕр тăрăх проектсем хатĕрлеме хăй пуçăнать, кунсăр пуçне проектсем валли облаç бюджетĕнчен укçа уйăраççĕ, вĕсем регион харпăрлăхĕ пулса тăраççĕ.

Проекта ĕçе янă хыççăн е ăна вĕçленĕ тапхăрта регион бюджетне самаях тупăш кӳрекен çĕнĕ предприятисене ял хуçалăхĕнче ку е урăх çул-йĕре аталантарма хатĕр инвесторсене параççĕ. Паллах, пуçламăш тапхăрти теветкеллĕхе çĕнтернĕ проектсемпе ытларах кăсăкланаççĕ.

ЧР Министрсен Кабинечĕн тата депутатсен Пенза çыннисен опычĕпе тимлĕрех паллашмалла, айккинчен укçа килессе кĕтмелле мар, хăйсен пуçарулăх кăтартмалла. Çапла вара эпир ял хуçалăх рынокне хамăр тĕллĕн йĕркелесе пыма май тупăпăр, çавăн пекех ялта анлă сарăлнă вун-вун тата çĕр-çĕр ĕç вырăнĕ туса хурăпăр».

**А.ВАСИЛЬЕВА.**

## КУН хыççăн КУН

☎ 56-04-26, 28-82-91

### "Чунран, хисеплесе"




***Çак ятпа республикăри тĕрлĕ районпа хулара ятарлă акци старт илнĕ. Ăна "Кĕр парни" уйăхлăх вăхăтĕнче ватă çынсемпе инвалидсене пасарсенче туяннă пахча çимĕçе киле çитерме пулăшас тĕллевпе пуçарнă.***

Акцие волонтерсем, çамрăксемпе студентсем, хастар та ырă чун-чĕреллĕ çынсем хутшăнаççĕ. Акă Шупашкарти Калинин районĕнче те ыр кăмăллăх акцийĕ иртет. Район администрацийĕн суту-илӳ секторĕпе Çамрăксен правительстви йĕркеленипе пурнăçланакан мероприяти кунран кун вăй илет. Акцирен Чăваш патшалăх педагогика университечĕн студенчĕсем те айккинче юлман: вĕсем "Николаевский" суту-илӳ комплексĕнче темиçе кун вăй хунă, 163 çынна пулăшнă.

**Е.АНДРЕЕВ.**

### Ача-пăча валли – автохула



***Шупашкарти 112-мĕш садикре ача-пăчана çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн правилисемпе паллаштаракан автохула ĕçлеме пуçланă.***

Уяв хăйăвне касма Шупашкар хулин ÇÇХПИ пайĕн пуçлăхне Алексей Теллин подполковника чĕннĕ. "Шел те, хулари çул-йĕр çинче пулакан инкекрен чылайăшĕ çул çитмен ачасемпе çыхăннă. Тĕслĕхрен, Шупашкарта кăçалхи 8 уйăхра 166 ача суранланнă", – пĕлтернĕ вăл.

Çакнашкал автохула Чăваш Енри шкул çулне çитмен учрежденисенче ниçта та çук. Пĕртен пĕр объекта пур енĕпе те тивĕçтернĕ: çул урлă каçмалли вырăн, светофор, çул-йĕр паллисем – автоçул çинчи пекех. Унта пĕчĕк шăпăрлансем вĕрентекенсемпе тата инспекторсемпе пĕрле çул çинче çӳремелли правилăсене вĕренĕç. Автохулара ачасем велосипедла тата шоферла вылĕç, хăюллăраххисем инспектор шлепкине те тăхăнса пăхма пултарĕç.

**О.МАСЛОВ.**

### "Художник – вăхăт ăрăмçи"



***Çак ятпа авăн уйăхĕн 11-мĕшĕнче Чăваш патшалăх ӳнер музейĕн хальхи искусствăсен центрĕнче "Атăлпа Урал хушшинче" курав уçăлнă.***

Унта Шупашкар, Мускав, Одинцово, Химки, Чул хула, Хусан, Пенза, Самар, Саратов хулисенчи, Серби тата Черногори çĕр-шывĕсенчи ӳнерçĕсем хутшăннă. Экспозицире – 120 ытла ӳнер ĕçĕ. Вĕсенчен 22-шĕ – скульптура хайлавĕ.

Ӳнер-скульптура ĕçĕсен кĕрекинче чуна çывăххи тата куçа йăпатаканни тупăнатех. Бронзăланă гипсран тунă П.Пупин скульпторпа та *(сăн ӳкерчĕкре)* "калаçма" пулать кунта – сăмах чĕнмесĕр "итлĕ" вăл сире. Курава тăратнă ĕçсене тĕрлĕ материалтан хатĕрленĕ. Театр искусствипе çыхăннă тĕпел В.Шведовпа В.Федоров ăсталăхне пĕр ывăça пуçтарнăн сăнарлать. "Выставкăна "Атăлпа Дунай хушшинче" ят парас шухăш та пурччĕ. Хальлĕхе иртерех-ха, малашне вара курăпăр,– аталанăвăн çул-йĕрне палăртрĕ "Художниксен пултарулăх союзĕ" Чăваш Республикинчи общество организацийĕн председателĕ Дмитрий Дубровин. "Вăхăт хăвăрт иртет, ӳнерçĕн вара ăна ĕлкĕрсе мар, унран маларах чупса пымалла! Художник вăл – вăхăт ăрăмçи!"– Хусантан килнĕ Ильдазар Самакаевăн çак сăмахĕсене куравăн девизĕ тесех йышăнмалла.

**В.СТЕПАНОВ.**

### Вĕренӳ иртет

***Чăваш Республикинчи терроризма хирĕç операцисене йĕркелекен Оперативлă штаб авăн уйăхĕн иккĕмĕш çурринче анлă вĕренӳ ирттерме палăртать.***

Умри тĕллевсене пурнăçламашкăн çар техникине, шывра ишмелли хатĕрсене тата авиацие явăçтарĕç.

Штаб халăха çак тапхăрта лăпкă пулма, хăрушсăрлăха уяма сĕнет, право хуралĕн органĕсен тата ятарлă службăсен ĕç-хĕлне чăрмантармалла марри пирки асăрхаттарать.

**К.ПАВЛОВ.**

**"Хыпар"Издательство çурчĕн хаçачĕсене 2015 çулăн I çурри валли республикăри почта уйрăмĕсенче çырăнма васкăр: «Хыпар» – 732,66 тенкĕ, «Хыпар-шăмат кун» – 304,08.**

### Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕрех çанталăк пулать, кăштах çумăр çукалать. Çил çурçĕртен 6 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 11, çĕрле 4 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 754 мм, сывлăшри нӳрĕк 53 процент.

**Кун тăршшĕ 12 сехет те 43 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать, çумăр çукалать. Çил çурçĕртен 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 9, çĕрле 4 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 758 мм, сывлăшри нӳрĕк 44 процент.

**Кун тăршшĕ 12 сехет те 38 минут.**

# Пĕрлехи ӳсĕме пурин те тӳпе хывмалла



/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.

Нумай хваттерлĕ çуртăн пиллĕкмĕш хутне шыв ытлăн-çитлĕн килсе тăманшăн, картишĕнчи тулли контейнерсенчен çӳп-çап вăхăтра турттарса кайманшăн республика Пуçлăхне ыйту парса чăрмантарнине йĕркеллĕ пулăм тееймĕн. Çапах та çынсем çĕкленĕ хăш-пĕр ыйтăва районти яваплă ертӳçĕсем мĕнлерех пурнăçа кĕртсе пынине хăй тĕрĕслесе тăма пулни çинчен пĕлтерчĕ Михаил Васильевич. Вĕсенчен пĕри – район центрĕнчи «Асамат кĕперĕ» /асăрхăр: пасарпа пĕр ятлăскер!/ ача садĕнче юсав ĕçĕсем калама çук вăраха тăсăлни, кун пирки ача амăшĕсем район тата поселок администрацийĕсем тивĕçлĕ утăмсем тума васкаманни çинчен ӳпкелешсе калани. Михаил Игнатьев: «Асамат кĕперĕ» хăçан ачасене йышăнĕ?» – тесе ыйтсан район администрацийĕн пуçлăхĕн Николай Чугаровăн хуравĕ татăклă пулчĕ: «Юпа уйăхĕн 10-мĕшĕнчен кая юлмăпăр». Çапла калани амăшĕсене çырлахтарчĕ пулас.

Çакăн хыççăн Михаил Игнатьева пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан пĕрремĕш вăтам шкулта ĕçлекенсем тараватлăн кĕтсе илчĕç. Коллектив çĕнĕ вĕренӳ çулне пур енĕпе те тĕплĕн хатĕрленнĕ. Кăçал 450 ытла ача парта хушшине ларнă, çавна май шкул столовăйне самаях пысăклатнă. Республика тата вырăнти бюджетсенчен уйăрса pană укçапа апат-çимĕç упрамалли вырăнпа столовăй валли çĕнĕ оборудовани туяннă.

Михаил Васильевич вĕренӳ пӳлĕмĕсене кĕрсе курчĕ, педагогсемпе кăмăлтан калаçрĕ. Шкул директорĕ Владимир Романов пĕлтернĕ тăрăх – вĕренӳ учрежденийĕ тĕрлĕ çăл куçран уйăракан нухрата тĕллевлĕн ĕçе кĕртет.

«Бухгалтери» тесе çырнă пӳлĕм патне çитсен хаклă хăна тăруках чарăнчĕ, шкул директорĕнчен: «Эсир штатра бухгалтера та тытатăр-им?» – тесе ыйтрĕ. Ара, республикăри шкулсенче шутлав ĕçне муниципалитетăн вĕренӳ пайĕн централизациленĕ бухгалтерĕсем йĕркелсе пыраççĕ-çке. «Сирĕн вара – урăхла йĕрке. Укçатенке перекетлес тĕллевпе шкулсенче бухгалтерсене кĕскетнĕ. Çавăнтан сирĕн те тĕрĕс тата тивĕçлĕ пĕтĕмлетӳ тумалла...» Михаил Игнатьев ку ыйту патне тепĕр хут таврăнма пулчĕ.

Ĕçлĕ çул çӳреври тепĕр чарăну – Йĕпреç поселокĕнчи Кооператив урамĕнчи пурăнмалли нумай хваттерлĕ 31-мĕш çурт çыннисемпе иртнĕ тĕл пулу. Республика Пуçлăхĕ хăйсем патне килессе чăтăмсăррăн кĕтекен ватă çынсене подъезд умĕнче ăшшăн саламларĕ те вĕсемпе калаçу пуçарчĕ. Ытти çĕрти пекех, кунта та çамрăксем курăнмарĕç. Сăлтавĕ паллă: паянхи кун вĕсен вырăнĕ е Мускавра, е Çурçĕрте, е Çĕпĕрте. Асăннă çуртри ватăсене вара çынсем Йĕпреç пасарĕнче хускатнă ыйтусемех канăç памарĕç: коммуналлă пулăшусем хакланни, пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсем япăхланса пыни, управляющи компани ĕçĕнчи йĕркесĕрлĕхсем т.ыт.те.

Узбекистанра çуралса ӳснĕ, хальхи вăхăтра Йĕпреç поселокĕнче пурăнакан Тыло Мамедов ĕç ветеранĕ Михаил Васильевича хăйĕн нуши çинчен пăшăрханса пĕлтерчĕ. Вăл ку тарана çитсе те хваттерлĕ пулайман иккен, савнă мăшăрне çухатнă хыççăн шанчăклă хӳтлĕхсĕр тăрса юлнă. Республика Пуçлăхĕ Раççей гражданинĕн статусне илнĕ çынна, çитмĕлрен иртнĕ пенсионера вырăнти влаçсем пулăшу парасса шантарчĕ.

Юлашкинчен район администрацийĕн ларусен залĕнче иртнĕ канашлура районăн социаллă пурнăçĕпе тата экономикипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе яврĕç. Предприятисемпе организацисен, учрежденисен, ял хуçалăх кооперативĕсен ертӳçисен, район Пухăвĕн депутачĕсен, шкул директорĕсен, ытти официаллă çынсен умĕнче район администрацийĕн пуçлăхĕ Николай Чугаров Йĕпреç районĕ кăçалхи 8 уйăхра мĕнлерех ĕçлени çинчен доклад турĕ. Ăна сӳтсе явма ял хуçалăх министрĕ Сергей Павлов, экономика аталанăвĕн министрĕ Владимир Аврелькин, вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов, ЧР вице-премьерĕ хутшăнчĕç, сĕнӳ-канаш пачĕç. Хăйĕн пĕтĕмлетӳ сăмахĕнче Михаил Игнатьев район экономики кал-кал, йĕркеллĕ аталанса пыни, ӳсĕм-çитĕнӳ тата та ытларах пултăр тесен пĕрлехи йышра кашни çын палăрăмлă тӳпе хывмалли çинче чарăнса тăчĕ. Вăл Йĕпреççене, пайăррăн илсен, вак тата пĕчĕк бизнесра вăй хуракансен ĕç укçи пĕчĕк пулнăшăн, строительство организацийĕсем хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлама тӳрĕ кăмăлпа хутшăнманшăн çивĕччĕн критиклерĕ. Критика саламачĕ «Стройкомплект» ООО, унăн тĕп директорне Асхат Алинова уйрăмах хыттăн пырса тиврĕ. Асăннă организаци тăлăх ачасене хваттерсемпе тивĕçтерес ыйтупа кирлĕ пек ĕçлемест, вăл пĕлтĕр те, кăçал та ятарлă объектсене хута ярассине тăсса янă. Район ертӳлĕхĕ те ку енĕпе лару-тăрăва лайăхлатма ăнтăлман. «Бюджетран укçа-тенкĕ вăхăтра тата кирлĕ чухлĕ куçарнă, тăлăх ачасем вара хăйсене тивĕçмелли хваттерсене кĕтсе илеймен. Ку ыйтăва прокуратурăн вĕçне çитермеллех, – терĕ çирĕппĕн Михаил Васильевич. – Пуçлăхсен ĕçне вара вĕсем çак ыйтăва мĕнлерех кăмăлтуйăмпа пăхнă тăрăх хаклĕç...»

Николай Чугаров республика ертӳлĕхне хăйсен ячĕпе пулнă асăрхаттарусене шута илме, лару-тăрăва лайăхлатас тĕллевпе тивĕçлĕ утăмсем тума, çынсен тĕрлĕ ыйтăвне татса памашкăн пулăшма шантарчĕ.

**ТЕПĔР САМАНТРАН ПАСАР СУТАКАНСЕМПЕ ТУЯНАКАНСЕН ВЫРĂНĔ КĂНА МАР, РЕСПУБЛИКА ПУÇЛĂХĔПЕ ЙĔПРЕÇ ПОСЕЛОКĔНЧЕ ПУРĂНАКАНСЕН ĔÇЛĔ КАЛАÇУ ВЫРĂНĔ ТЕ ПУЛСА ТĂЧĔ. ÇАПЛА ПУЛМАЛЛА ТА ĔНТĔ, МĔНШĔН ТЕСЕН МИХАИЛ ИГНАТЬЕВ КИРЕК ĂÇТА КАЙСАН ТА ХАЛĂХПА КУÇА-КУÇĂН ТĂРСА, УÇÇĂН КАЛАÇАССИНЕ ЧИ МАЛТИ ВЫРĂНТА ТЫТАТЬ, КУН ПЕК ЧУХНЕ ÇЫНСЕНЧЕН ВĔСЕНЕ ЫТЛАРАХ МĔН ХУМХАНТАРНИ-ПĂШĂРХАНТАРНИ ÇИНЧЕН ЫЙТСА ПĔЛЕТ**

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

## ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ



# Кĕрхи кун çулталăк тăрантарать

***"Мураты" – Вăрнар районĕнче малта пыракан хуçалăхсенчен пĕри. Кунта кашни самантпа тĕллевлĕн усă кураççĕ, палăртнине вăхăтра пурнăçлаççĕ. Çурла уйăхĕн 26-мĕшĕ тĕлне кĕрхи ĕççене вĕçленĕ. 820 гектар çинчи тĕш тырра вырса-çапса пĕтернĕ. Кĕрхисене 300 гектар акса хăварнă.***

Çĕр улми кăлармa та хуçалăх районта чи малтан тухнă. "Иккĕмĕш çăкăр" лаптăкĕ – 100 гектар. Эпир Çăкаллă Явăшра пулнă кун çĕр улми пуссинче саккăрмĕш кун ĕçлетчĕç. "Çанталăк йĕркеллĕ тăрсан икĕ кунта кăларса пĕтеретпĕр, – хавхаланса калаçрĕ хуçалăх ертӳçи Геннадий Спиридонов. – Пирĕн майлă пулаканччĕ-ха вăл. Пĕр кун акă йĕри-тавра çумăр çукаларĕ, çак уйра пĕр тумлам та ӳкмерĕ". Турри те ĕçлекен кăмăлне хуçасшăн мар ахăртнех.

Çĕр улми пуссинче тăвата комбайн ĕçлет. А.Федоров, Б.Шариков, Г.Илларионов, А.Никитин механизаторсем лайăх çитĕннĕ "иккĕмĕш çăкăра" вăхăтра тата çухатусăр пухса илессишĕн тăрăшаççĕ. В.Максимов, С.Митрофанов, Б.Федоров, Г.Алексеев водительсем çĕр улмине сортировка пунктне турттараççĕ. Кунта мĕн пур ĕçе механизациленĕ. Агрегат хăех вĕттипе шултрине уйăрать. Ятарлă бригадăри çынсем касăлнисене кăна суйласа илеççĕ. Электрокарсем пысăк ешчĕксем çине тултарнă çимĕçе тиесе кайса управа хураççĕ. Пĕчĕк техникăсенчен пĕринпе председатель çумĕ Юрий Спиридонов ĕçлетчĕ. Ăна курнă хыççăн "сан-ман çине пайласси çук иккен кунта, çавăнпа ĕçĕ те кал-кал пырать те ĕнтĕ" пуçра шухăш вĕçсе иртрĕ.

**ПЫСĂК КĂТАРТУ "НИКĔСĔ" – ÇĔР УЛМИ ПУССИНЕ ÇĂВĔПЕХ ШĂВАРСА ТĂНИ**

Кăçал çанталăк çумăрпа иртĕнтермерĕ пулин те "иккĕмĕш çăкăр" ăнса пулнă. Геннадий Петрович каланă тăрăх – тухăç пĕлтĕрхинчен аванрах, гектартан вăтамран 200-220 центнер тухать. Пысăк кăтарту "никĕсĕ" – çĕр улми пуссине çăвĕпех шăварса тăни.

Хуçалăхăн техникисем хăватлă, пурте çĕнĕ йышши. Акă Владислав Волков "Джон Дир" тракторпа хирте суха тăвать. "Çакăн йышши пĕчченех пин гектар çĕре сухаласа пăрахма пултарать", – тет вăл.

Çурхи тата кĕрхи ĕççи вăхăтĕнче хуçалăхра хăйĕн столовăйĕ ĕçлет. Эля Арсентьевăпа Алина Рябинская поварсем вĕри апатпа хире те тухаççĕ. "Тутлă пĕçереççĕ. Хаклă та мар", – теççĕ кунта апатланакансем.

"Мураты" хуçалăха Геннадий Спиридонов 2003 çултанпа ертсе пырать. Ĕçе пĕлсе йĕркелени, халăхпа пĕр чĕлхе тупма пултарни ăнăçусем туса пыма май парать.

■ **Валентина БАГАДЕРОВА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем





# Петров урамĕнчи инкек



***Авăн уйăхĕн 12-мĕшĕнче 19 сехет те 56 минутра Çăлав службине Шупашкар хулинчи Петров урамĕнчи 165 хваттерлĕ, 3 подъездлă 9-мĕш çуртра пурăнакансенчен сигнал çитнĕ. Вĕсем пĕр подъездри хваттерсен стенисем çурăлнине пĕлтернĕ.***

Информацие Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев патне çитернĕ, чрезвычайлă лару-тăрăва сирес енĕпе ĕçлекен оперативлă штаб йĕркеленĕ. Çăлав службисен тата Шалти ĕçсен министерствин сотрудникĕсен вăйĕпе çуртра пурăнакансене пурне те эвакуациленĕ, çурта электроэнерги, газ, шыв пама пăрахнă, çавăрса илнĕ, хурал тăрать.

Эвакуациленĕ çемьесене вăхăтлăха строительство техникумĕн общежитине, социаллă реабилитаци центрĕсене тата А.Г.Николаев ячĕллĕ 10-мĕш вăтам шкула вырнаçтарнă. Вĕсене апатлантарассине, ĕçмелли шывпа тивĕçтерессине йĕркеленĕ, психологи пулăшăвĕ панă.

Михаил Игнатьев çак пӳрт çывăхĕнче пулнă, лару-тăрупа паллашнă, кунта хăйсен тивĕçне кура пырса çитнĕ служба́семпе должноçри çынсем пĕр тикĕс, кирлĕ пек ĕçленине палăртнă.

Авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ чрезвычайлă лару-тăрăва сирес енĕпе ĕçлекен оперативлă штаб ларăвне ирттернĕ.

Оперативлă информаци тăрăх – 70 хваттерте 153 çын пулнă. Малтанлăха пĕлтернĕ тăрăх – чрезвычайлă лару-тăру пӳлĕмсемпе усă курмалли йĕркене пăснипе, вĕсене аслăрах органсене пĕлтермесĕр çĕнĕрен планировка тунипе сиксе тухнă. Çавна май плитасем йĕпеннĕ, формине улăштарнă. Юлашки темиçе уйăх çурта «Ăшă çурт» пăхса тăракан компани тивĕçтернĕ, унччен – «Капремстрой» управляющи компани. Юлашки икĕ çулта Чăваш Ен Патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр инспекцине çуртра пурăнакансенчен çăхавсем пыман.

«Мĕн пур служба тата влаç органĕсен должноçри çыннисем сигнал илсен питĕ хăвăрт, пĕлсе ĕçленĕ. Çынсене вăхăтра эвакуациленĕ, газпа, шывпа тивĕçтермелли тытăмсене, электроэнерги памалли тытăма вăхăтра чарса лартнă. Медицина тата психологи пулăшăвĕ кӳмелли ыйтусене тӳрех татса панă. Полицейскисем талăкĕпех дежурство тăрассине йĕркеленĕ, çуртра пурăннисем хăварнă пурлăха сыхлассине тивĕçтернĕ», – палăртнă республика Пуçлăхĕ.

Çивĕч ыйтусене сӳтсе явнă май Михаил Игнатьев ЧР Строительство министерствине – кĕске вăхăтра экспертсен пĕтĕмлетĕвне хатĕрлеме, Министрсен Кабинетне Шупашкар хулин администрацийĕпе пĕрле эвакуациленĕ граждансене вырнаçтарассине тата апатлантарассине йĕркелес, çуртра пурăнакансене медицина тата психологи пулăшăвĕ, çавăн пекех вĕсем пурлăхне çухатас тăк укçа-тенкĕ пулăшăвĕ парас енĕпе мерăсем йышăнма хушнă.

**А.ВАСИЛЬЕВА.**

# Чрезвычайлă лару-тăру режимĕ çинчен – хушу

***2014 çулхи авăн уйăхĕн 13-мĕшĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев регион шайĕнчи чрезвычайлă лару-тăру режимне кĕртесси çинчен 308-рг хушăва алă пуснă.***

Министрсен Кабинетне тата Шупашкар хулин администрацине чрезвычайлă лару-тăрăва пула инкек тӳснĕ граждансене вăхăтлăха вырнаçтарассине, апатлантарассине тивĕçтерме хушнă. Çавăн пекех чрезвычайлă лару-тăрăва сирмешкĕн Министрсен Кабинечĕн резерв фондĕнчен палăртнă йĕркепе бюджет укçи-тенкине уйăрассине, инкек тӳснĕ граждансене Чăваш Республикин патшалăх пурăнмалли çурт-йĕр фончĕн коммерци мелĕпе усă куракан пурăнмалли пӳлĕмĕсене черетсĕр парассине тивĕçтермелле.

Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствине инкек тӳснĕ граждансене медицина тата психологи енĕпе реабилитацилемелли ĕçсем ирттерессине тивĕçтерме хушнă.

ЧР Шалти ĕçсен министерствине чрезвычайлă лару-тăру вырăнĕнче общество йĕркелĕхне сыхлассине тивĕçтерме, ют çынсем кĕресрен пурăнмалли çурта сыхлама, Раççей Федерацийĕн саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ытти ĕçе пурнăçлассине йĕркелеме сĕннĕ.

## ТĔРĔСЛЕВ

# Çул-йĕр хуçалăхĕ хĕле хатĕр-и?

## Шуçлакра автотранспорт инкек тӳсме пултарать

***ЧР Транспорт тата çул-йĕр хуçалăхĕн министерствин «Чăваш Ен çул-йĕр управленийĕ» хысна учрежденийĕ çурла уйăхĕн 12-мĕшĕнче «Чăваш Республикинчи регион тата муниципалитет пĕлтерĕшлĕ пурте усă куракан çулсене 2014-2015 çулсенчи хĕллехи тапхăра хатĕрлесси çинчен» хушу кăларнă. Унта пурнăçламалли тĕп мероприятисене палăртнă. Автоçулсене хĕлле йĕркеллĕ усă курма епле хатĕрленине тĕрĕслеме комисси туса хунă.***

Подряд организацийĕсем çак кунсенче шуçлакран сыхлакан материал, рабочисемпе водительсене сивĕре кĕрсе ăшăнма тата канма ятарлă вырăнсем хатĕрлеççĕ, юр тасатакан тата хăйăр-тăвар сапакан техникăна юсаççĕ, тутăхнисене сăрлаççĕ.

Авăнăн 10-мĕшĕнче управлени директорĕн çумĕ Алексей Алексеев, «Чăвашавтоçул» АУОн çул-йĕре тытса тăрас енĕпе ĕçлекен управленийĕн пуçлăхĕ Виталий Пименов Чăваш наци телекуравĕпе «Хыпар» журналисчĕсемпе Вăрмарти, Сĕнтĕрвăрринчи çул-йĕре юсакан управленисене çитсе курчĕç.

Вăрмарсем 3800 тонна хăйăр, 708 тонна тăвар кӳрсе килнĕ. Вĕсене тӳрех хутăштараççĕ: 1 пай тăварпа 9 пай хăйăр. Хĕлле шăнман пирки унпа усă курма меллĕ. «Хутăш пĕтĕмпе çичĕ пин тоннăна яхăн пулмалла. Вăл пире хĕл каçма çитет, – пĕлтерчĕ Вăрмарти управлени директорĕ Сергей Яковлев. – Тăвалла хăпаракан çул хĕрринчи хĕрлĕ ешчĕксене те çак хутăша саппас тултаратпăр. Водительсем йывăрлăха лексен тӳрех усă курччăр».

Çул-йĕре юсакан управлени территорийĕнче юр тасатакан техника, «КамАЗ» автомашина пилĕкшер. Хăйăр-тăвар хутăшне сапакан хатĕр – 4. Ăна автомашина кузовĕ çине шанчăклă çирĕплетеççĕ, çуркунне кăна илеççĕ. «Кун чухлĕ техника района çителĕклĕ, – терĕ Сергей Михайлович. – Автомашина шучĕ çулсерен хушăнать, авари пулсах тăрать, анчах пирĕн айăпа пула иртнĕ хĕлле çын вилнĕ е аманнă тĕслĕх пулманччĕ-ха. Çитес тапхăрта та районти çул-йĕре вăхăтра юртан тасатса, шуçлакра хăйăр-тăвар сапсах тăратпăр. Синоптиксем çанталăк улшăнасса пире 3 кун маларах пĕлтереççĕ. Çакă пире вут-кăварпа кĕрешекенсем пекех çула тухмашкăн яланах сыхă пулма май парать».

Мăнçырма ялĕ çывăхĕнче те пултăмăр. Кунта рабочисем Валерий Герасимов прораб ертсе пынипе шăтăк-путăклă çула асфальт сарса тикĕслеççĕ. 2014 çул валли уйăрнă кĕмĕл 400 метр тăршшĕ сарма çитет.

Сĕнтĕрвăрринчи çул-йĕр юсакан управлени валли лимитпа 15 млн тенкĕ /республикăран – 7, вырăнтан – 8/ уйăрнă. «Унпа тĕллевлĕ усă куратпăр, – тет управлени директорĕ Дмитрий Михайлов. – Эпир 160 çухрăм тăршшĕ çула пăхса тăратпăр, 57-шĕ – регион, 103-шĕ – вырăнти пĕлтерĕшлĕ».

Журналистсем ыйтусем пачĕç. Тăварлă хăйăр хĕлле ată-пушмака питĕ пĕтерет. Ку чухне урăх йышши материалпа усă курма май килмест-ши? Ку хутăш чи йӳнни иккен. Урăх йышшисем те пур, анчах хаклă. Çитменнине, хăйĕн техники кирлĕ. Пурне те хушса шутласан астрономиллĕ цифра пулать. Хальлĕхе республика ăна пурнăçлама хатĕр мар.

Çул-йĕр техники те кивĕ. Вĕри асфальта пусăрăнтарса якатакан каток та вун-вун çул каялла кăларнăскер. Юр хыракан хатĕр те вансах тăрать. Сĕнтĕрвăрринче ăна сварщиксем хулăн металл татăкĕсемпе шăратса çыпăçтарчĕç. Малярсем сăрларĕç. Тягачпа пĕрле çĕнĕрен туянма 4 млн тенкĕ кирлĕ. Çавăнпа та хальлĕхе мĕн пуррипех çырлахма тивет.

Хăйăр-тăвар хутăшне районсенче 2-3 вырăнта хатĕрлесен аван пулмалла та, анчах ку ĕç çĕр ыйтăвĕпе çыхăннă. Ăна туянма та кĕмĕл кирлĕ. Сĕнтĕрвăррисем хутăш купине çулленех Ворни ялĕ çывăхĕнче хатĕрлеççĕ. Пĕр вырăнтан районăн тĕрлĕ кĕтесне çитме вăхăт самаях иртет, топливо та тăкакланать.

Хĕллехи вăхăтра автотранспорта инкексинкекрен асăрханма пулăшас тесен çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен шухăшламалли çителĕклех.

■ **Валентин ГРИГОРЬЕВ**

## Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕм виççĕмĕш сессийĕ çинчен

Чăваш Республикин пиллĕкмĕш суйлаври Патшалăх Канашĕн черетлĕ çирĕм виççĕмĕш сессийĕ 2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче Шупашкар хулинче, Правительство çуртĕн ларусем ирттермелли Пысăк залĕнче /Шупашкар хули, Президент бульварĕ, 17-мĕш çурт/ уçăлать. 10 сехетре пуçланать.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсемпе чĕннĕ хăнасене 2014 çулхи авăн уйăхĕн 16-мĕшĕнче Правительство çуртĕн ларусем ирттермелли Пысăк залĕн фойинче 9 сехетрен пуçласа регистрацилеççĕ.

Ыйтса пĕлмелли телефон: 64-21-65.

ЛАРУ

Шупашкар 2014

# «Çанталăк кăна ан кансĕрлетĕрччĕ»

## Шупашкарсем форума тĕплĕн хатĕрленеççĕ

***Ĕнер Правительство çуртĕнче «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» форума тата Раççей Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен канашăн ларăвне хатĕрленсе ирттерес енĕпе ĕçлекен республикăри йĕркелӳ комитечĕн ларăвĕ иртрĕ. Ăна ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕ Иван Моторин ертсе пычĕ. Хальхинче икĕ ыйту пăхса тухрĕç.***

Спорт форумĕ иртнĕ кунсенче хулара йĕркелĕхе, хăрушсăрлăха тивĕçтерес ыйтусем пирки ЧР шалти ĕçсен министрĕ Сергей Семенов пĕлтерчĕ. «Çак тĕллевпе ятарлă оперативлă штаб туса хунă, ăна эпĕ хам ертсе пыратăп. Палăртнă мероприятисен планĕ те хатĕр. Хамăр ĕçе волонтерсене те явăçтарасшăн. Хурал организацийĕсем те хулара йĕрке тума пулăшĕç. Тутарстанран, Самар облаçĕнчен служба йыттисемпе тивĕçтерме пулăшу ыйтасшăн. Мероприятисем иртнĕ вырăнта çул-йĕр паллисене ытларах лартмалла»,– терĕ Сергей Евстафиевич. Пĕтĕм тĕнчери спорт форумне йĕркелесе ирттерме пурĕ 647 волонтер пулăшĕ.

Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхĕ Алексей Ладыков çул-йĕр ыйтăвĕсем çинче чарăнчĕ. «Кăçал Шупашкарти çулсене пĕлтĕрхипе танлаштарсан ытларах çĕнетнĕ. Нумаях пулмасть Сĕнтĕрвăрри çулне тĕпрен юсанă. Халĕ хăш-пĕр урамри шăтăк-путăка пĕтерес енĕпе ĕçлеççĕ»,– уçăмлатрĕ Алексей Олегович. Спорт форумне килекен хăнасем мероприятисен планĕпе килĕшӳллĕн Кӳкеçе те, Çĕнĕ Шупашкара та çитмелле. «Çак кунсенче çав çулйĕре пăхса тухрăм. Кӳкеçпе Çĕнĕ Шупашкар хушшинчи çул начар. Тĕп хулапа химиксен хули хушшинчи çул çинче çӳп-çап, ăпăр-тапăр нумай. Çул хĕрринчи хирсенче хыт хура ашкăрать, çавсене çак кунсенчех йĕркене кĕртесчĕ»,– терĕ ЧР Пуçлăхĕн Администрацийĕн ертӳçи Александр Иванов.

ЧР физкультурăпа спорт министрĕ Сергей Мельников Пĕтĕм Раççейри ГТО нормативĕсене йышăнмалли Пĕрлехи куна йĕркелесси пирки каласа пачĕ. Сергей Владимирович пĕлтернĕ тăрăх – тĕп ăмăртусем Шупашкарти «Спартак» стадионта иртмелле. Хальлĕхе унта юсав ĕçĕсем пыраççĕ. Мĕн пур ĕçе юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне вĕçлемелле. «Мероприятие 5000 яхăн çын, 250 судья хутшăнмалла. «Энергия» стадионпа Хĕрлĕ тӳремре те ăмăртусем иртĕç. Форума килекен кашни çын хăйĕн вăйне тĕрĕслесе пăхма, ГТО нормативне пурнăçлама пултарать. Çак фестивале хула çыннисемшĕн хаваслă праçник пек йĕркелесшĕн. «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери форума тата Раççей Президенчĕ çумĕнчи Физкультурăпа спорта аталантарас енĕпе ĕçлекен канашăн ларăвне хатĕрленсе ирттерес енĕпе йывăр ыйтусемех çук, чи кирли çанталăк кăна ан кансĕрлетĕрччĕ», – палăртрĕ Сергей Владимирович.

Алексей Ладыков пĕлтернĕ тăрăх – пур садикре те, шкулта та ирхи зарядкăсем кăна мар, ăмăртусемпе турнирсем те иртеççĕ. Вĕренекенсем спорт темипе сочиненисем те çыраççĕ. «Иртнĕ эрнере хулари 15 предприяти ертӳçине пухрăмăр, ĕç вырăнĕсенче ГТО нормативĕсене пурнăçлас енĕпе ăмăртусем йĕркелеме сĕнтĕмĕр. Унта çĕнтернĕ, 10 çынран /5 хĕрарăмпа 5 арçын/ тăракан ушкăн авăн уйăхĕн 27-мĕшĕнче район ăмăртăвне хутшăнĕ. Юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче вара Шупашкарта чи вăйлисем финалта вăй виçĕç», – терĕ Алексей Олегович. Çапла, хула спорт форумне тĕплĕн хатĕрленет. Шупашкарта пур çĕрте те пĕлтерӳсем çакнă, республикăри паллă спортсменсен сăнĕсене вырнаçтарнă.

■ **Роза ВЛАСОВА**

ПРЕССА ФЕСТИВАЛĔ

# Эстафета спортпа туслă пулма хавхалантарать

## Вăйлисемпе хăюллисен 76-мĕш ăмăртăвĕ

***Шăмат кун «Энергия» стадионта прессăн спорт фестивалĕ – «Советская Чувашия» хаçатăн парнисене çĕнсе илессишĕн çăмăл атлетика эстафети иртрĕ. Ăмăртăва спортпа туслисемпе сывă пурнăç йĕркине пăхăнакан 3000 ытла çын хутшăнчĕ.***



Совет Союзĕн икĕ хут Геройне А.Г.Николаев космонавт летчика асăнса 76-мĕш хут иртнĕ чупура республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен, патшалăх тата вырăнти влаç органĕсен, спорт ветеранĕсен, çемье, шкул, студентсен, ĕç коллективĕсен командисем тупăшрĕç. Спорт уявне йăлана кĕнĕ тăрăх ăмăртăва хутшăнакансен парачĕ уçрĕ. Вĕсене Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ Юрий Попов, РФ Патшалăх Думин депутачĕ Анатолий Аксаков, «Советская Чувашия» хаçатăн тĕп редакторĕ Владимир Васильев, Олимп чемпионки Елена Николаева тата ыттисем саламларĕç.

«Çулсерен йĕркелекен эстафета çынсен чи юратнă ăмăртăвĕ пулса тăчĕ, çавăнпа унта вăй виçекенсен йышĕ те яланах пысăк. Турнир ачасемпе çамрăксене сывă пурнăç йĕркине пăхăнма, спортпа туслă пулма вĕрентет. Чăваш Енре массăллă спорта аталантарас енĕпе сахал мар ĕç пурнăçланать, Шупашкарта çулталăкне иртекен вун-вун ăмăрту та çак шухăша çирĕплетет. Акă юпа уйăхĕнче иртекен «Раççей – спорт çĕр-шывĕ» Пĕтĕм тĕнчери форум та республика ятсумне çӳлерех çĕклеме май парĕ», – терĕ Михаил Васильевич.

ЧĂВАШ ЕНРЕ МАССĂЛЛĂ СПОРТА АТАЛАНТАРАС ЕНĔПЕ САХАЛ МАР ĔÇ ПУРНĂÇЛАНАТЬ, ШУПАШКАРТА ÇУЛТАЛĂКНЕ ИРТЕКЕН ВУН-ВУН ĂМĂРТУ ТА ÇАК ШУХĂША ÇИРĔПЛЕТЕТ

Яланхи пекех эстафета VIP-чупуран пуçланчĕ. Старта ЧР Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев, паллă спортсменсем, патшалăх органĕсен ертӳçисем, депутатсем, район пуçлăхĕсем тата ыттисем тухрĕç. Кăçалхи ăмăрту программи хăйне евĕрлĕрех пулнипе те палăрса тăчĕ: эстафетăна пĕрремĕш хут ятарлă тата коррекци шкулĕсенче вĕренекенсем хутшăнчĕç. Вĕсен йышĕ пысăках пулмарĕ пулин те маттурскерсем мала тухассишĕн тупăшрĕç. Чи пултаруллин ятне вара Шупашкарти адаптивлă спорт шкулĕнче ăсталăха туптакан яшсемпе хĕрсем тивĕçрĕç.

Республикăри массăллă информаци хатĕрĕсен ĕçченĕсенчен Вăрмарти «Хĕрлĕ ялав» хаçат редакцийĕн командине çитекенни пулмарĕ. Элĕкри «Пурнăç çулĕпе» хаçат журналисчĕсем иккĕмĕш вырăн йышăнчĕç, ЧР Наци телерадиокомпани спортсменĕсем – виççĕмĕш. Çемье командисен хушшинче Шупашкарти Пучковсем /7 çула çитичченхи ачапа/ тата Полетаевсем /8-13 çулсенчи ачапа/ пьедесталăн чи çӳлти картлашки çине хăпарчĕç. Патшалăх тата вырăнти влаç органĕсен командисен йышĕнче ЧР Ял хуçалăх тата Шалти ĕçсен министерствисен, Элĕк районĕн администрацийĕн маттурĕсем çĕнтерчĕç. Ытти ушкăнра та чи вăйлисемпе хăюллисем палăрчĕç.

■ **Андрей МИХАЙЛОВ**

СПАРТАКИАДА

# «Атăлçи Олимпĕ»: сывлăх, ăнтăлу, савăнăç



## Ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнисен уявĕ



«Хăвăртрах! Çӳллĕрех! Вăйлăрах», – янăрать спорт девизĕ. Хальхинче вăл Федерацин Атăлçи округĕнчи тĕрлĕ ача çурчĕсенче пурăнакан 13-18 çулсенчи яшкĕрĕмпе хĕр-упраçа çитĕнӳ тума йыхравларĕ. Авăн уйăхĕн 13-14-мĕшĕсенче Олимп резервĕсен Çĕнĕ Шупашкарти ачасемпе çамрăксен 3-мĕш спорт шкулĕнче ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнăскерсем валли «Атăлçи спорт Олимпĕ» спартакиада иртрĕ. Ăмăртăва 14 регионти ача çуртĕнчен 300 çын килнĕ. Малтанах ачасем пĕрлештернĕ командăна кĕрессишĕн шкул, район, регион шайĕнче ăмăртнă. Финал Чăваш Республикинче иртнĕ. Пĕрремĕш кунхине ача çурчĕн воспитанникĕсем мини-футболра, стритбаскетра, волейболпа дартсра, ишессинче вăй виçрĕç. Хастарсен тепĕр пайĕ сĕтелçи теннисла тата шашкăлла вылярĕ. Спартакиада хупăннă кун спортсменсем эстафета чупрĕç.

Уява РФ Президенчĕн Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕн Михаил Бабичăн пулăшуçи Сергей Валенков, ЧР Министрсен Кабинечĕн ертӳçи Иван Моторин, ЧР тĕп инспекторĕ Геннадий Федоров уçрĕç. Сергей Юрьевич Михаил Бабич ятĕнчен сăмах каларĕ.

– Тĕрлĕ регионти çамрăк спортсменсем пĕрле пуçтарăнса ăмăртăва еплерех хатĕрленнине кăтартĕç. Спорт йывăрлăхсене парăнтарма, командăпа çитĕнӳ патне талпăнма пулăшать. Пĕрисемшĕн кунашкал ăмăрту пĕрремĕш хут иртĕ, чылай тус-юлташ тупма пулăшĕ, – тенĕ Михаил Викторович çырăвĕнче.

Спартакиада уçăлнă кун «çăлтăрпа» зарядка йĕркеленĕ. Ăна спорт аэробики енĕпе аслă категориллĕ тренер Ольга Журавлева ирттерчĕ. Унсăр пуçне хăнасемпе ăмăртăва хутшăнакансем Çĕнĕ Шупашкарти ача-пăча пултарулăх ушкăнĕсен ташшисене курса савăнчĕç. Уяв уçăлнă хыççăн командăсем арена тавра çаврăнчĕç. Кун хыççăнах ăмăртусем старт илчĕç.

Тĕрлĕ лапамра арçын ачасемпе хĕр ачасем стритбаскетла, волейболла вылярĕç. Шашистсем уйрăм пӳлĕмре ăмăртрĕç. Кашнин 8 парти выляма тиврĕ. Ăмăртăвăн малтанхи тапхăрĕнче вăй виçекенсенчен чылайăшĕ çитĕнӳ хыççăн çитĕнӳ тума ĕлкĕрчĕ. Валерия Илларионова спартакиадăна Пăрачкаври ача çуртĕнчен çитнĕ.

– Пирĕн командăра – 25 çын. Эпĕ харăсах икĕ ăмăртăва хутшăнăп. Пĕрремĕш кунхине шашкăлла вылярăм. Спартакиада хупăннă кун эстафетăра хутшăнма кăмăл турăм. Эпĕ ытларах икĕ çак енпе интересленетĕп. 10 çултанпа шашкălла выляс ăсталăха аталантаратăп. Вăйă йĕрки ансат пулин те тепĕр чухне пуçа çĕмĕрттермелли те тупăнать. Халĕ 7 çынпа тупăшрăм. Пĕринче çĕнтертĕм, тепринче – ăнăçу ман енне çаврăнмарĕ... Акă тепĕр парти вылямалла. Тен, манăн кăтарту лайăххисен йышне кĕрĕ? Çăмăл атлетикăна пуринчен ытла кăмăллатăп. Чун киленĕçĕсен йышĕнче вăл – пĕрремĕш вырăнта. Спартакиадăна хутшăнассишĕн нумай тар тăкма тиврĕ. Чылай вăхăта тренировкăра ирттертĕм. Тăрăшни сая кайманнине шанас килет, – пĕлтерчĕ Валерия.

Спартакиадăн пĕрремĕш кунхине ишекенсен тупăшăвĕ иртрĕ. Вĕсем ăмăртнине курма Çĕнĕ Шупашкарти шкулсенче вĕренекенсемпе ача садне çӳрекенсем йышлăн килнĕ. «Чирлекенсем» кашни регион ачисене хаваслăн кĕтсе илчĕç. Ăмăрту вĕçленнĕ хыççăн Самар облаçĕнчен çитнĕ Настя Князевăпа калаçрăм. Пике 5 хĕр ача хушшинче 4-мĕш вырăн йышăнине пĕлтерчĕ.

– Куншăн пăшăрханмастăп. Ăмăртăва хутшăнни те мĕне тăрать! Кашниех çĕнтерейместь. Спорт çакнашкал вăл. Ача çурчĕн воспитанникĕсем валли «Атăлçи спорт Олимпĕ» евĕр ăмăрту иртни – савăнăç. Куншăн чунран хĕпĕртетĕп. Спартакиада тĕрлĕ регионти хĕр ачасемпе арçын ачасене пухать, туслă пĕр çемьери пек пурăнма вĕрентет. Эпĕ яланах тренировка ирттеретĕп, час-часах тĕрлĕ региона тухса çӳретĕп. Ашшĕ-амăшĕн хӳттисĕр юлнисем валли иртекен ăмăртăва пĕрремĕш хут хутшăнатăп пулин те вăл кăмăла кайрĕ. Чылай тус-юлташ тупрăм, – сăмах çăмхине сӳтрĕ пике.

Спартакиада кăтартăвĕсем ăмăртăвăн иккĕмĕш кунхине паллă пулчĕç. Малти вырăна Мордва Республики тухрĕ. Иккĕмĕшпе виççĕмĕшне Пушкăрт Республикипе Пермь крайĕ пайларĕç. «Спортра чи кирли мала тухни мар – ăмăртăва хутшăнни», – теççĕ. Çĕнĕ Шупашкарта иртнĕ спартакиада та ача çурчĕн воспитанникĕсен асĕнче чылайлăха юласса шанас килет.

■ **Ирина КОШКИНА.**

Геннадий ВЕРБЛЮДОВ сăн ӳкерчĕкĕсем

ÇĔНĔ КĔНЕКЕ

# "Моабит тетрачĕсем"

***Аллăмра – тутарсен аслă поэчĕн, Совет Союзĕн Геройĕн Муса Джалилĕн фашистсен тыткăнĕнче çырнă сăвăсен "Моабит тетрачĕсем" ятлă пуххи. Кĕнеке чăвашла кун çути курнă. Ăна тăван чĕлхепе тăван халăх патне çитерекенĕ – Чăваш халăх поэчĕ, Чăваш тата Тутар республикисен культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Валери Туркай.***




Çак кĕнекен хăçан та пулин кун çути курмаллахчĕ. Ку тĕлĕшпе иккĕленӳ пулман, мĕншĕн тесен Валери Туркай "шкул ачи чухне те, филолог-студент чухне те Муса Джалилĕн сăввисене юратса та хавхаланса вуланă, тăванла тутар халăхĕн пĕтĕм тĕнче пĕлекен çакăн пек паттăр сăвăç пурришĕн савăннă". Телее, çак хавхалану-савăнăç харама каймарĕ: чăваш поэчĕ тутар поэчĕн сăввисене куçарма пуçларĕ. Ку çеç-и? Валерий Владимирович Кавказ тăрăхĕнче пурăнакан вунă халăхăн сăвăçисен, Пушкăртстанăн тĕнчипе паллă поэчĕн Мустай Каримăн тата ыттисен тĕрлĕ çулта çырнă хайлавĕсене чăвашла кун çути кăтартрĕ.

Чăваш литературин "хăйĕн хуранĕнче" çеç пиçмелле мар! Совет саманинче пирĕн çыравçăсем ытти халăх çыравçисемпе питĕ туслă пулнă. Аякри çывăхри тусăмăрсен хайлавĕсене чăвашла куçарса пичетленĕ, вĕсем пирĕнне хавхаланса куçарса кун çути панă. Ку тĕлĕшпе, паллах, нихăçан манăçми Петĕр Хусанкайпа асран кайми Геннадий Айхи уйрăмах нумай ĕçленĕ. "Эпĕ вăйăм-халăма çитерсе асăннă икĕ Улăпăн пархатарлă ĕçне малалла тăсатăп çеç", – тенĕччĕ пĕр интервьюра В.Туркай хăйĕн ĕçĕ-хĕлĕн тĕллевне уçăмлатса. Чăнах та, пуш сăмахсем мар вĕсем. Чăваш поэчĕ хăй каланине пурнăçа кĕртсех пырать. "Моабит тетрачĕсем" чăвашла кун çути курни те çакна тепĕр хут çирĕплетниех пулчĕ.

Тутар халăхĕн аслă поэчĕн сăввисене пĕрин хыççăн теприне вулатăп. Вĕсене тăван чĕлхепе ăса хывма май пурришĕн савăнатăп. Куçаруçăн ĕçĕн пархатарне чунпа туйса илетĕп. Тăван чĕлхе – тăван чĕлхех çав! Тутар поэчĕн сăввисене чăвашла сĕтеклĕ куçарма В.Туркая хăй тутарла аван пĕлни те пулăшнах ĕнтĕ. Çакна поэт хăй те пытармасть: "Ачаллах тутар чĕлхине илтсе те юратса ӳсни, тутарла чухлани Муса Джалиль сăввисене лайăхрах та тарăнрах ăнланма, çак сăвăсен вырăсла варианчĕсенче çук хăйне евĕрлĕхсене уйăрса илме тата палăртма пулăшрĕ. Аллăма чĕрем çине хурса çирĕплететĕп: Муса Джалилĕн "Моабит тетрачĕсенчи" сăвăсен кашни йĕркине эп тутарла та, вырăсла та питĕ тĕплĕ вуласа куçартăм".

Хаклă вулаканăм! Санăн умăнта – çĕнĕ кĕнеке. "Моабит тетрачĕсен" тулли варианчĕ. Эсĕ ăна халĕ тăван чĕлхепе, чăвашла, вулама пултаратăн. Иккĕленместĕп: тутар поэчĕн шухăш-кăмăлне, ĕмĕт-тĕллевне, хуйхи-суйхине чăваш чĕлхи урлă туйса илме май пурри кĕнекене алла тытма хистетех.

■ **В.БАГАДЕРОВА**

***Валери ТУРКАЙ***

# Сократпа калаçни

– Ну, Сократ, мĕнле
пурнатăн?
Тахçанах сана курман!
Эс иккен, Сократ-тăванăм
Çав-çавах пуçна усман.

Илтрĕм эпĕ – хушнă теççĕ
Наркăмăш сана ĕçме.
Пит ĕçес марах тесессĕн,
Сан тивет-мĕн ӲКĔНМЕ.

Ӳкĕнсем, Сократ, тархасшăн!
Эс ытла та сăмахна
Яланах татса калатăн,
Шеллеместĕн пач хăвна.

Тумланма – туму çук санăн.
Çăкăр çук сан килӳнте.
Ачусем лараççĕ выçă.
Эс – вĕçен таçта, çӳлте!..

Эс тĕрĕссине калатăн –
Килĕшетĕп – яланах.
Хăвна çеç тăватăн япăх
Эс кун пек чухне, хăвнах!

Ултавпа усал пĕтмерĕ
Сан тĕрĕслĕхне пула.
Эс курсам, санран, тăванăм:
Пĕтĕм çут тĕнче кулать!

Такама та кӳрентертĕн,
Тарăхтартăн çынсене...
Пурте – япăх, эсĕ – лайăх!..
...Халь кĕтен, ав, ВИЛĔМНЕ...

Ӳкĕнсем, Сократ, тархасшăн!
Кирлĕ эс, Сократ, пире!
Пулмасассăн эс, тăванăм,
Тем çитмест пек тĕнчере.

...Эс ятне кăна, тăванăм,
Ту! Тусам ӳкĕннĕ пек!
Çак кăна санран халь кирлĕ.
Мĕн тăван эс ВИЛĔМПЕ?!

Пулмĕ нимĕн те – вилсессĕн!
Çук, çуках вăл – "леш тĕнче"!
Мĕн пурри кунта кăна вăл –
Çакă аслă Çĕр çинче!..

...Çийĕнчех асран эс тухăн.
Манĕç çийĕнчех сана...
Çын тени – тусан кăна вăл!
Пĕлмеллех пек сан çакна!..

.............................................

...– "Ӳкĕнсем, тархасшăн!"
тетĕн,
Тусăм, эс мана апла?
Ман, сана итлес пулсассăн,
Чакмалла-и каялла?

Малалла ялан эп утрăм,
Пăрăнмасăр хам çулран.
Чăнлăх эп ялан шырарăм,
Тĕлĕнтĕм ялан ÇЫНРАН.

Ыррине те эпĕ куртăм,
Куртăм эп пайтах усал.
Пурăнтăм çапах та эпĕ,
Пурнăçа чунтан савса.

Чăнлăха юратнăран эп,
Туслă пултăм чăнлăхпа.
Яланах, ниме пăхмасăр,
Утрăм эпĕ ХАМ ÇУЛПА.

Эп суйма вĕренеймерĕм –
Ĕмĕр иртнĕçем çаплах.
Сăмаха татса каларăм,
...Ытлашши те, тен, кăштах?

Ман пекки те кирлĕ терĕм –
Çакă çутă тĕнчере.
Патшана йăпăлтатмарăм,
Шикленмерĕм тӳререн.

...Тăшмансем-и?.. Мĕн
тăвас тен,
Пур вĕсем ман, пур, çук мар.
Вĕсенчен эп хăрамастăп.
Çыннăн пулмаллах тăшман!

ВĔСЕНЕ ПУЛА эп юлăп
Ĕмĕрсен ахрăмĕнче.
Чи пахи – таса ман чунăм
Тӳпепе Çĕр умĕнче!

..."Пулмĕ нимĕн те –
вилсессĕн! –
Тетĕн эс, – çук –
Леш Тĕнче?.."
Çылăха кĕретĕн, тусăм,
Халь эс Турă умĕнче!

ВИЛĔМ ÇУК! – çакна ан манăр!
ХĂНАРА эпир кунта!
Пирĕн килĕмĕр УНТА вăл!
Пĕтĕм пурнăç та – УНТА!

Сăнасах УНТА тăраççĕ
Çĕр çине килнисене.
Яланах УНТА кĕтеççĕ –
Таврăнма пикеннине.

Акă мĕншĕн юрамасть ман
"Шеллĕр!.. Йăнăшрăм!.." теме.
Таврăнма ман вăхăт çитрĕ,
Эп туятăп, КИЛĔМЕ.

Тин кăна ăнлантăм эпĕ,
Пурнăçра чи кирлине:
ХĂНАНА КИЛНИН ÇАПАХ ТА
ПĔЛМЕЛЛЕХ КАЙМА КИЛНЕ!

Каймалла УНТА ӳпкевсĕр,
Ылханмасăр кун-çулна.
Каймалла УНТА – ямасăр
Чăнлăх умĕнче ятна.

Каймалла УНТА – анмасăр
Хăв çĕкленнĕ ту çинчен,
Каймалла УНТА – чакмасăр
Хăв чунтан ĕненнинчен!

.............................................

– Ах, Сократ!.. Сократ
темерĕн!..
Çук сана улăштарма!..
– Çавăнпа СОКРАТ эп, тусăм –
Юрамасть ман улшăнма!

19.12.13 – 14.01.14

## Сиплевçĕ

### ДИАБЕТ

#### Курăксем çăмăллăх кӳреççĕ

● Хупах тымарне, хура çырла çулçине пĕр пек виçепе илсе хутăштармалла. 50 грамм хутăша вĕренĕ 1 литр шыва 10-12 сехетлĕхе ямалла. Ун хыççăн 5-7 минут вĕретмелле, 15 минут пиçĕхтерсен сăрăхтармалла. Яра куна ĕçмелле.

● Хура çырла çулçине, шалча пăрçин хутаççине, йĕтĕн вăррине, сĕлĕ улăмне /вĕтетни кирлĕ/ пĕр пек виçепе хутăштармалла. 3 апат кашăкĕ хутăша 3 стакан шывра 10 минут вĕретмелле, 1 сехетрен сăрăхтармалла. Апат хыççăн кунне 3-4 хут çуршар стакан ĕçмелле.

● Хупах тымарне, хура çырла çулçине, шалча пăрçин хутаççине 20-шер грамм илсе хутăштармалла, 1 литр шыва 12 сехетлĕхе лартмалла. 5 минут вĕретмелле, 1 сехет иртсен сăрăхтармалла. Кунне 3-4 хут 1-ер стакан апат хыççăн 1 сехетрен ĕçмелле.

### ХАЛĂХ МЕДИЦИНИ

#### Ӳслĕкрен

1 лимона вăйсăр çулăм çинче 10 минут пĕçермелле. Вăл çемçелет, уйрăмах хуппи, унран сĕткенне ытларах кăларма пулать. Сĕткене стакана ямалла, 2 апат кашăкĕ глицерин хушмалла. Лайăх пăтратмалла. Ун хыççăн стакана пыл тултармалла. Сĕткен вырăнне пан улми уксусĕпе те усă курма юрать.

Сайра хутра кăна ӳсĕрсен яра куна 1 чей кашăкĕ ĕçмелле. Ĕçес умĕн хутăша пăтратса илмелле. Ӳслĕк çĕрле хытă аптратсан çывăрма выртас умĕн тата çĕрле 1-ер чей кашăкĕ ĕçмелле. Пĕрмаях ӳсĕрсен ирхине, кăнтăрлахи апатчен, кăнтăрла хыççăн тата çĕрле – 1-ер апат кашăкĕ. Ыттисемпе танлаштарсан ку эмел вар-хырăма сиен кӳмест.

### ХАМĂР ТĂРĂХРИ ӲСЕН-ТĂРАН

#### Армути

● Кăмпа чирĕпе сиенленнĕ вырăнсене армути шывĕпе çуни усăллă. Çак шĕвеке апат содипе пыл хушсан вăл ангина чухне пулăшать. Вĕтетнĕ курăка сурансем çине те хураççĕ, пыл кăштах хушма юрать. Армути ӳт кĕçĕтнине те иртерме пултарать.

● Пӳсĕр тухсан пĕчĕк çеç хутаçа армути хумалла, пӳсĕр тĕлне хурса çирĕплетмелле.

● Ыйхă çĕтсен минтер çумне армути хунă пир хутаç вырнаçтармалла.

Армути çавăн пекех килçуртра кĕве ĕрчесрен те сыхлать. Çак тĕллевпе ăна кĕпе-тумтир хушшине хураççĕ.

#### Хыр йĕкелĕ

Хыр йĕкелне çуркунне пуçламăшĕнче лайăх çанталăкра пухмалла. Типĕтнĕ хыççăн кĕленче савăта хумалла. Кунта вĕсем тепĕр çуркуннеччченех упранма пултараççĕ.

Спирт ярса хыр йĕкелĕнчен настойка хатĕрлеççĕ. Вăраха кайнă юхан-суран чухне, тип пыр шыççи, ревматизм нумай вăхăт асаплантарсан юна тасатмашкăн çак шĕвекпе усă кураççĕ.

Хыр йĕкелне шыва ямалла. 10 минут вĕретмелле, шăнса чирлесен шĕвек пăсĕпе сывламалла.

### АПТЕКĂНА КАЙМАСĂРАХ

#### Шĕпĕнрен – сухан

Пирĕн асанне-кукамай усă курнă темиçе рецепт сĕнетпĕр.

● Шĕпĕне е ал-ура çинчи хытнă вырăнсене /мозоль/ сухан сĕткенĕ сĕрмелле, тӳрех çуса ямалла мар.

● Сухан сĕткенĕпе пыла пĕр пек виçепе илмелле, çĕрле ӳте сĕрмелле, çиелтен компресс тумалли хут хумалла, çыхмалла. Шĕпĕн айккинчи ӳте вазелин сĕрмелле.

● Ура тупанĕн ӳчĕ кушăрхасан çĕрле сухан касăкĕсем хумалла.

#### Шута илме

● Кашни кунах хытă ывăнсан çывăрма выртас умĕн ăшă сĕте ыхра сĕткенĕ /1 стакан сĕте – 10 тумлам сĕткен/ хушса ĕçмелле.

● Артрит чухне 500 грамм хĕрлĕ эрехе, 300 грамм сельдерей сĕткенне тата 700 грамм кишĕр сĕткенне хутăштармалла, сивĕтмĕше 2 сехетлĕхе лартмалла. Апат умĕн кунне 2 хут çуршар стакан ĕçмелле.

● Диабетпа чирлекенсен банан çинчен манмалла. Çапах та чире улталама пулать – ку çимĕçе питех те юратсан лавккара ăна пиçментереххине суйламалла, пăртакшар кăна çимелле.

● Кашни кунах чĕрĕ пахча çимĕçпе улма-çырла çисен çӳç хăвăртрах тата çăра ӳсĕ.

● Ĕне тата сурăх ашĕнче çӳçе йăлтăртатса тăма пулăшакан микроэлементсем пур.

### ВУЛАКАН СĔНЕТ

#### Язвăран – тутлă эмел

Больницăра тухтăр манăн вар-хырăм язви пулнине пĕлтерсен эпĕ хама таблеткăсемпе сиен кӳрес темерĕм, халăх мелĕсем шырама пуçларăм. Питĕ ансат та тутлă рецепт суйласа илтĕм.

Çур литр сĕте вĕретмелле, кăштах сивĕтмелле. Çур литрлă кĕленчене чĕрĕ 2 çăмарта, 2-шер апат кашăкĕ пыл тата çемĕçнĕ услам çу ямалла. Лайăх пăтратмалла, вĕри сĕт майĕпен-майĕпен ямалла, пăтратсах тăмалла. Сĕте ирхи апат вырăнне сыпкăмăн-сыпкăмăн ĕçсе ямалла. Çакăн хыççăн 4 сехет çимелле мар. Çапла 1 уйăх сипленмелле, тĕрĕссипе, 1 эрнеренех хăвăра лайăхрах туйма пуçлатăр. Сипленнĕ вăхăтра диетăна пăхăнмалла /тĕтĕмленĕ, пăрăçлă апатсем çиме юрамасть/.

**А.ТРЕСКИНА.**

### ТЕХĔМЛĔ ТЕ, УСĂЛЛĂ ТА

#### Банан рулечĕ

**300 грамм тăпăрч, 2 çăмарта, пĕчĕкрех 2 банан, 5-6 апат кашăкĕ çăнăх, 1 апат кашăкĕ сахăр песукĕ, услам çу кирлĕ.**

Тăпăрча çăнăхпа, çăмартапа, сахăр песукĕпе хутăштармалла, чуста çăрмалла, йĕтĕрлемелле /хулăнрах пултăр/. Банана хуппине тасатса чустан пĕр хĕррине хумалла, рулет пек вырнаçтармалла. Чустана çиелтен çăмарта сĕрмелле, çу сĕрнĕ, çăнăх сапнă çатмана хумалла. Духовкăра çур сехете яхăн пĕçермелле.

**Антонина ДОЛГОВА хатĕрленĕ.**

### ВĔÇЕН КАЙĂК

# Шур акăш чĕппи, ай, шыв ĕçет...

## Унăн пуласлăхĕ пулĕ-ши?

***«Шур акăш хальхи вăхăтра Чăваш Енре йăва çавăрмасть, ун урлă вĕçсе иртнĕ чух хӳтлĕхе апатланма çеç анса ларать» тесе палăртнă «Чăваш Республикин кайăкĕсем» кĕнекере /2013 ç./. Орнитологсене çĕнĕ хыпарпа савăнтаратăп: иртнĕ уйăхра çут çанталăкăн уйрăмах сыхлакан пĕр лаптăкĕнче /трофей пуçтаракан браконьерсенчен асăрханса карттă çине пӳрнепе тĕллесе кăтартас килмест/ пĕр мăшăра тата икĕ чĕппине асăрхарăм. Çăвăрсем пирĕн патра çитĕнни иккĕлентермест.***



Çапах та шур акăш чăваш хутлăхĕнче питĕ сайра тĕл пулать. М.Н.Богданов тĕпчевçĕ çырса /1871/ хăварнинчен вăл Вăта Атăлпа Кама тăрăхĕнче аван ĕрченине, Сăр тăрăхĕнчи айлăмра йăва çавăрнине пĕлетпĕр. М.Д.Рузский Хусан кĕпĕрнинче чĕп кăларнине, кăнтăртан çитсе йышлă иртнине асăннă /1893/. Шур акăш çулĕ Атăл, Кама, Сăр тăрăх тăсăлать. Хăш-пĕр ушкăнăн вăл пĕчĕк, вăтам юхан шывсемпе тӳр килет. Б.М.Житковпа С.А.Бутурлин 1909 çулта «çак кайăк 30-40 çул каялла Чĕмпĕр кĕпĕрнинче сăрă хур пекех йышлăн йăва çавăрнине» çырса хăварнă. XX ĕмĕр пуçламăшĕнче вĕсем Сăрăн никам çӳремен улăхĕсенче çынсем курнине çеç илтнĕ. И.Б.Волчанецкий пĕр мăшăр Улатăр районĕнчи Алтышево ялĕ çывăхĕнчи Хура кӳлĕре çу каçнине /1919/ пĕлтернĕ.

1998-2012 çулсенче республика урлă иртекеннине ешĕллĕхре – 15, вăл шутра ака уйăхĕнче 7 хутчен курнă. А.Л.Лебеш Шупашкар ГЭСĕн хыçĕнче, тĕрлĕ кайăк-кĕшĕк пулă тытма пуçтарăнакан вырăнта, 3 асăрханă /2002/. К.И.Арзамасцев Куславкка районĕнчи Курăчкин ялĕн таврашĕнче 15 шутланă /1999/. Çĕмĕрле районĕнчи Мăн Улхашпа /2000/ Шăмăршă районĕнчи Шăмăршă ялĕсен /2010/, Çĕнĕ Шупашкар /2011/ хĕрринче, Çавал юхан шывĕн Шупашкар районĕнчи юппинче /2001/ 2-шерĕн шывра ишнĕ. Пăрачкав районĕнчи «Кире» пулă хуçалăхĕн пĕвинче /2008/ – 8-ăн, Куйбышев шыв управĕнче, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Водолеево ялĕ тĕлĕнче /2010/ 5-ĕн çунаттисене тасатнă.

Шур акăш тăршшĕ 145-160 см, çуначĕсене 218-245 см таран сарать, 5-14 кг таять. Хăй шурă, сăмси хăмăр. Ама 5-7 çăмарта тăвать. Чĕпсем унтан тухсанах амăш хыççăн чупкалаççĕ, хăмăшлăхри е улăх-çаранри тĕм çинчи йăвана хăвараççĕ. Апачĕ – симĕс курăк, çурăм шăммисĕр вĕт чĕр чун. Кăнтăрта, Европăн çеçен хирĕнче, Çĕпĕрте тĕл пулаççĕ.

ШУР АКĂША ЧР ХĔРЛĔ КĔНЕКИНЕ КĔРТНĔ. АПЛА ПУЛСАН ĂНА ÇЫВĂХА ПЫРСА ХĂРАТМА, ТЫТМА, ВĔЛЕРМЕ ЮРАМАСТЬ

Хура тинĕсре, Каспипе Азов тинĕсĕсенче хĕл каçаççĕ. Шур акăша нумай регион Хĕрлĕ кĕнекене кĕртнĕ.

И.А.Кощеев çулла Улатăр хулин тасату объекчĕн шĕвек каяш пухмалли хатĕрĕнче /2001/ – 1, Куславкка районĕнчи «Карамышевский» пулă хуçалăхĕн пĕвинче /2008/ – 2, Энĕш юхан шывĕ Куйбышев управĕпе юпленнĕ вырăнта 5 шута илнĕ. Апла тăк вĕсем çав вырăнсенче чĕп кăларма пултарнă.

Кĕркунне – 5 тĕл пулу: Шупашкар районĕнчи Шанарпуç ялĕн çумĕнче, Кăкшăм юхан шывĕн улăхĕнче /1998/, Атăл леш енчи Астраханка кӳллинче /2007/ – 1, Акăшăн пĕчĕк кӳллинче /2012/ – 9, Улатăр районĕнчи «Сăр» пулă хуçалăхĕн пĕвине Сăр юхан шывĕпе çыхăнтаракан сыпăкра – 1. Çакăн çинчен А.В.Григорьевпа А.А.Ширшов пĕлтерчĕç. Хăш-пĕрне хам курнă.

«Сăр» патĕнчи автомашинăпа 10 метра çывхарсан та вĕçсе хăпармарĕ. Уйăх çурăран Улатăр районĕнчи Аношкино кӳлли хĕрринче, малтанхи вырăнтан 500 метрта, шур акăш виллине асăрхарăмăр /2012/. Тен, вăл пирвай пулă хуçалăхĕ патĕнче тĕл пулниччĕ. Çав çулах «Сăрçи» заповедникăн сыхлав ункинчи Çĕнĕ Старица кӳлли хĕрринчи симĕслĕхре, кăнтăр акăшĕпе, сăрă хурпа пĕрле шур акăш пĕсехине курăкпа тултаратчĕ.

Вăл Чăваш Ен урлă çуркунне /акан 3-16-мĕшĕсенче/ – 30-100, кĕркунне /юпан 7-22-мĕшĕсенче/ 10-50 иртет. Пĕррехинче, 2002 çулхи пушăн 3-мĕшĕнче, куртăм.

Шур акăша ЧР Хĕрлĕ кĕнекине кĕртнĕ. Апла пулсан ăна çывăха пырса хăратма, тытма, вĕлерме юрамасть. Вăл Европăри çĕр-шывсенче те сахал. Çавăнпа хӳтĕлекен кайăксен йышĕнче. Раççейĕн Европа пайĕнче сайра тĕл пулакан, çĕр пичĕ çинчен çухаласси патне çитнĕ кайăк. Раççей, Китай, Инди, Япони вĕçен кайăк-кĕшĕке хӳтĕлесси пирки çирĕплетнĕ килĕшӳре шур акăш вĕçсе иртнĕ чух вăхăтлăха чаранакан, чĕп кăларакан вырăнсене патшалăх енчен хӳтĕлеме тĕллев лартнă.

■ **Геннадий ИСАКОВ,**
**биологи ăслăлăхĕсен кандидачĕ**

*Аслă Çĕнтерӳ: 70 çул*

# Пăшалпа та, сăмахпа та

***Нимĕç эшкерĕ Совет Союзне вăрçăпа тапăнса кĕрсен ВКП/б/ Чăваш обкомĕн яваплă ĕçченĕсем те пĕрин хыççăн тепри фронта ăсаннă.***

Константин Михайлович Арзамасцев ВКП/б/ обкомĕн промышленноçпа транспорт секторĕн пуçлăхĕ пулнă. Хĕрлĕ Çар ретне тăнă хыççăн политработниксен кĕске курсĕнче вĕреннĕ. Ун хыççăн стрелоксен 304-мĕш дивизийĕн 1093-мĕш полкне çитет. Мускав çывăхĕнчи вăйлă çапăçусенче Арзамасцев политрук пирĕн çар подразделенийĕсене тăшманпа паттăррăн çапăçма хавхалантарать.

1942 çулхи кăрлачăн 26-мĕшĕнче Сухиничи хулине фашистсенчен тасатассишĕн пынă çапăçура тăшман мини политрукпа юнашарах ӳкет: Арзамасцев вилмеллех аманать.

Кузьма Николаевич Николаев – ВКП/б/ Чăваш обкомĕн партстатистика пайĕн ертӳçи. Вăрçă тухсан виççĕмĕш куннех Хĕрлĕ Çар ретне тăнă. 1941 çулхи хура кĕркунне рота комиссарĕ, каярахпа батальон политрукĕ Мускава тăшманран хӳтĕлессишĕн тата тасатассишĕн пынă хаяр çапăçусене тӳрремĕнех хутшăнать.

1942 çулхи пуш уйăхĕн 7-мĕшĕнче Смоленск облаçĕнчи Заречное ялне тăшманран тасатнă чухне батальон политрукĕн пурнăçĕ татăлать.

Федор Кириллович Шатров – ВКП/б/ обкомĕн йĕркелӳ пайĕн пуçлăхĕн çумĕ. Вăрçă çулĕ Калинин фрончĕн 135-мĕш дивизийĕнче пуçланать. Мускав çывăхĕнчи çапăçусенче Шатров политрук ытти салтаксене ырă тĕслĕх кăтартать. Асăннă дивизи çĕр-шывăн вун-вун хулипе çĕр-çĕр ялне тăшманран тасатать. Çĕнтерӳ çулĕпе Германие çитет. Хĕрлĕ Ялав, Хĕрлĕ Çăлтăр, Тăван çĕр-шывăн вăрçи орденсене тивĕçет.

Захар Владимирович Владимиров – ВКП/б/ Чăваш обкомĕн çар пайĕн ертӳçи. 1941 çулхи çĕртме уйăхĕн вĕçĕнче Хĕрлĕ çар ретне тăнă. Командовани ăна аслă политрук званине панă, Кăнтăр-хĕвел анăç фронтне янă. Кунта Владимиров лейтенант 1941 çулхи утă уйăхĕн 7-мĕшĕ – авăнăн 26-мĕшĕнчи тапхăрта Киева хӳтĕлессишĕн пынă çапăçусене хутшăннă. Каярахпа стрелоксен 4-мĕш дивизийĕн 101-мĕш полкри минометсен батарейин комиссарĕ. 1943-1945 çулсенче юнлă нумай çапăçăва хутшăнать. Дивизи çĕнтерĕве Германире кĕтсе илет. Владимиров майор-политрук Александр Невский тата Хĕрлĕ Çăлтăр орденне, "Паттăрлăхшăн" медале тивĕçет.

Василий Осипович Осипов – ВКП/б/ Чăваш обкомĕн лекторĕ. Стрелоксен 324-мĕш дивизийĕн истори пĕлтерĕшлĕ формулярĕнче çапла çырнă: "1941 çулхи раштавăн 12-мĕшĕнче Тула облаçĕнчи Люторичи ялĕ тăшманран ирĕке кăларнă чухне темиçе хут та алран алла куçать. Атакăсенчен пĕрне Осипов политрук ертсе пырать. Аманнă пулин те стройран тухмасть вăл. Çиччĕмĕш хут аманнă хыççăн пирĕннисем ăна çапăçу хирĕнчен илсе тухаççĕ. Каярахри çапăçусенчен пĕринче Осипов политрук паттăрлăх кăтартса вилет".

Мускава хӳтĕлессишĕн пынă çапăçусенчи хăюлăхпа паттăрлăхшăн В.Осипов лейтенанта Хĕрлĕ Çăлтăр орденпа наградăланă. Çакăн çинчен ВКП/б/ обкомне 324-мĕш дивизи командирĕ Н.И.Кирюхин генерал-майор пĕлтернĕ.

■ **Галина МИХАЙЛОВА.**
Шупашкар хули

# Вĕренӳ хыççăн – музее

***Авăн уйăхĕнче вĕрентекенсемшĕн хĕрӳ тапхăр пуçланчĕ. Ачасене ăс панисĕр пуçне вĕсем хăйсен пĕлĕвне ӳстерме те манмаççĕ.***

Çак кунсенче Елчĕк тата Комсомольски районĕнчи биологипе хими учителĕсен курсĕсем вĕçленнĕ. ЧР Вĕренӳ институчĕн естествăлла наукăсен кафедрин (пуçлăхĕ – Наталья Борисова доцент) преподавателĕсем ертсе пынипе йĕркеленĕ вĕренӳре квалификацие виçĕ эрне ӳстернĕ: лекци итленĕ, курс ĕçĕ çырнă, хальхи технологисемпе паллашнă, тĕрлĕ тест тĕрĕслевĕ витĕр тухнă. Удостоверение алла илнĕ хыççăн педагогсем, преподавательсем тата вĕренӳ пайĕн ĕçченĕсем Елчĕк тăрăхĕнчи паллă вырăнсене çитсе курнă. Чи малтан хăнасем Патреккел çăлĕн шывне тутанса пăхнă, унтан районти истори-тавра пĕлӳ музейĕпе паллашнă. Вĕсене вырăнти ал ĕç ăстин В.Васильевăн ĕçĕсен куравĕ уйрăмах килĕшнĕ.

**О.МАСЛОВ.**

# Хăмăшри Ровеннăн пултарулăхĕпе ăсталăхĕ

***Çĕр çинчи кашни çын хăйне евĕр, илемпе хитрелĕхе те хăйне май йышăнать. Чунчĕрене хĕпĕртев кӳрекен пĕчĕк япала та пирĕн пултарулăха ăнланма пулăшать.***



Вăрнар районĕнчи Хăмăш ялĕнче пурăнакан Ровенна Васильевăн хуçалăхĕнче ăсталăхпа, пултарулăхпа, ĕлккенлĕхпе тахçанччен киленме пулать. Ровенна Геннадьевна картишĕнчи кану вырăнне те, чечек клумбисене те хăйне евĕр тунă. Унăн хуçалăхĕнче юрăхсăра тухнă япаласем те "чĕрĕлнĕ". Кивĕ куршаксем



валли те вырăн тупăннă. Пахчара хăйне евĕр "çынсем" хуçаланаççĕ. Кивĕ калушсемпе атăсенче тĕрлĕ ӳсентăранпа чечек ешерет. Садра вара çуллахи вăхăтра хĕвелтен пытанмалли беседка хăтланă. Ун çывăхĕнчи тĕм çинче "аист" йăва çавăрнă... Садра та, пахчара та, çурт умĕнче те чечексем хĕм сапаççĕ.

**А.ГРОМОВА.**

Реклама Пĕлтерӳ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Администрация Моргаушского района Чувашской Республики сообщает о наличии свободного земельного участка, распределяемого на праве аренды из категории "земли сельскохозяйственного назначения" с кадастровым номером 21:17:050801:708, местоположение: Чувашская Республика, Моргаушский район, Большесундырское сельское поселение, для ведения сельскохозяйственного производства, общей площадью 30645 кв.м. Заявки принимаются в течение месяца с даты опубликования объявления по адресу: 429530, село Моргауши, улица Мира, дом 6. (1 этаж администрации района), МАУ "МФЦ", с 8-00 час. до 17-00 час. ежедневно, кроме выходных дней. Телефон для справок: 8 (835-41) 62-5-99, 8 (835-41) 62-3-15.

**ПРОДАЮ**

**4.Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка - бесплатно. Т. 89875766562.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 89051990122.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, **металлосайдинг.** Т. 444433.

**19.Гравмассу,** песок, **керамзит, бой** кирпича. Т. 89033225766.

**61.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое качество. Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**75. Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**172.Гравмассу,** керамблок, **песок,** щебень. Д-ка. Т. 89023277585.

**178.Гравмассу, песок, цемент.** Д-ка. Т.: 8-927-849-76-75, 89278497674.

**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, **бетон,** раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.

**341.Гравмассу, песок, бой кирпича.** Доставка. Т. 89030666630.

**372.Песок, гравмассу,** щебень, торф, навоз, **керамзит.** Доставка. Т.: 8-960-308-08-54, 8-917-066-04-80.

**570.Щебень, песок, гравмассу,** навоз, торф, чернозём. **Доставка.** Услуги самосвала – 15 тн. Т. 8-987-669-29-41.

**618.Копалки, сортировки, плуги, дискаторы,** разбрасыватели. Дёшево. Доставка. Т. 8-937-955-98-02.

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Г.А.МАКСИМОВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
Г.А.МАКСИМОВ /директор-тĕп редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.В.ГРИГОРЬЕВ

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 15.09.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 7393. Заказ 3479.